Пурнӑҫа, ҫӗршыва юрат, тӑван халӑх мӗнпе чӗрӗ, ҫавна юрат!

# ТУСЛӐХ

НУРЛАТ РАЙОНӖН ОБЩЕСТВӐПА ПОЛИТИКА ХАҪАЧӖ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаҫат 1931 ҫулхи июлӗн 9-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ.* N36 (4605) *1998 ҫулхи апрелӗн (ака) уйӑхӗн 1-мӗшӗ, юнкун* *Палӑртнӑ хакпа.*

## Проект кантурӗн юбилей

"Татгазпроект" проект кантурӗн Нурлатри филиалӗ хӑйӗн пӗрремӗш юбилейне паллӑ турӗ. Вунӑ ҫул каялла ҫак пӗчӗк коллектив - кунта хальхи вӑхӑтра 5 ҫын ҫеҫ вӑй хурать - газ кӗртмелли проектсене тума тытӑннӑ. Вӗсем урамсене газ пӑрӑхӗсене хывмалли, ҫуртсене газ кӗртмелли ҫӗршер тӗрлӗ проектсем тунӑ. Кӑҫалхи январь, февраль уйӑхӗсенче проектантсем Мамӑкпа Зузеево ялӗсем валли проектпа смета докуменчӗсем хатӗрленӗ. 1997 ҫулта заказчиксем ыйтнипе пай 218 миллион тенкӗлӗх документаци хатӗрленӗ. Унӑн услугисемпе Нурлат районӗнче пурӑнакансем ҫеҫ мар, Аксу районӗн ҫыннисем те усӑ кураҫҫӗ.

## Компьютер сечӗ ҫанлӑланать

Район администрацийӗн социаллӑ тивӗҫтерӗвӗн пайӗн компьютер сетьне икӗ уйӑхра 4000 пенсионер ӗҫне ытла кӗртнӗ ӗнтӗ. Ҫак кунсенче ТР Социаллӑ тивӗҫтерӳ министерствинчен тата пилӗк компьютер илсе килнӗ. Ҫитес ҫывӑх вӑхӑтра кунта сахал тупӑш илекен халӑхӑн адреслӑ чек хӳтлӗхӗн программине кӗртӗҫ.

## Икӗ ялӑн савӑнмалли вӑхӑт ҫитет

Ҫуткӳл тата Анат Нурлат ялӗсене сетьри газ ярассипе хатӗрлев ӗҫӗсен тата тепӗр тӗп тапхӑрне пурнӑҫланӑ: килекен газопровода газ янӑ, ҫак кунсенче газ пайлакан пунктсене тата Ҫуткӳл ялӗнчи урамсенчи газ пӑрӑхне ревизи тӑваҫҫӗ. Апла пулсан, ҫак ялсенчи ҫуртсенче "сенкер" топливо ҫунма тытӑнасси те инҫе мар.



Владимир Григорьевич пурнӑҫӗ тӑршшӗпе шофер пулса вӑй хурать. 36 ҫул хушшинче ӑна мӗнле кӑна маркӑллӑ машинӑпа ӗҫлеме тата миҫе ҫухрӑм иртме тӳр килмен пулӗ. Юлашки вӑхӑтра ӑна уйрӑмах яваплӑ ӗҫ шанса панӑ - ҫуламалли-сӗрмелли материалсем турттарать. Унӑн бензовоз машини каялла таврӑнасса хуҫалӑхра чӑтӑмсӑррӑн кӗтеҫҫӗ. Кунта вара Владимир Григорьевич ырӑ сӑмахсене кӑна тивӗҫлӗ.

Ӳкерчӗкре: "Тӗрнеҫ" хуҫалӑх шоферӗ В.Г.Макаров.

## "Нурлатсахар" кооперативра

Районта "Нурлатсахар" производство кооперативӗ йӗркеленни ҫинчен хаҫат ҫырса пӗлтернӗччӗ ӗнтӗ. Вӑл сахӑр кӑшманне ӳстерсе ҫитӗнтерӗ тата ӑна ӗҫлесе хатӗрлӗ. Ҫак пӗрлешӗве тухӑҫлӑ ӗҫлеттерме халь йӗркелӳпе хатӗрлев ӗҫӗн пысӑк калӑпӑшне пурнӑҫламалла. Иртнӗ эрнере Нурлатри сахӑр заводӗнче ҫак кооператива кӗрекен хуҫалӑхсен (вӗсем вара районта 16) ертӳҫисемпе тӗп бухгалтерӗсем хутшӑннипе иртнӗ ӗҫлӗ канашлура шӑпах ҫак ыйтусене сӳтсе яврӗҫ. Палӑртнӑ тӑрӑх, "Нурлатсахар" кооперативӑн пурӗ 5000 гектар сахӑр кӑшман уйӗ пулӗ, ҫуррине француз фирми хӑй ҫине илӗ. (Пухӑва "Сюкден-керри" фирмӑн районти яланхи представителӗ Жан Марк хутшӑнчӗ).

"Нурлатсахар" тутлӑтымар ӳстерсе ҫитӗнтерекен кооперативсемпе, фермер хуҫалӑхӗсемпе пӗрле ӗҫлеме хатӗр.

## Пуху пулнӑ

Нумаях пулмасть хресченсен хуҫалӑхӗсен Синдряков ячӗпе хисепленекен ассоциацийӗн, "Нурлат" агрофирмӑн составне кӗрекенскерӗн, Анат Чаллӑ уйрӑмӗн ("1Мая" пулнӑскерӗн) членӗсен иртнӗ пӗрлехи пухӑвӗнче хуҫалӑхсене реформӑласси ҫинчен ыйту тӗп вырӑн йышӑнчӗ. Тӗплӗ калаҫура уйрӑмра сыснасем ӗрчетессине маларла аталантарас пирки хӑйсен шухӑшне пӗлтерчӗҫ. Юлашкинчен уй-хирсенчи ҫурхи ӗҫсем тӗлне хатӗрленесси мӗнле пынине пӑхса тухрӗҫ, ҫак яваплӑ кампание тӗплӗ хатӗрленессин тата йӗркеллӗ ирттерессин пӗлтерӗшне уйрӑм палӑртрӗҫ, мӗншӗн тесен пуян тухӑҫ ҫитӗнтересси ҫак тапхӑртан нумай килет.

Пухӑва район администрацийӗн пуҫлӑхӗн пӗрремӗш ҫумӗ Ю.В.Терентьев, "Нурлат" агрофирмӑн тӗп директорӗ Р.С.Чахмахчев хутшӑнчӗҫ тата тухса калаҫрӗҫ.

## Тӑвата тумлам вакцина...

***Апрелӗн 6-мӗшӗнчен тытӑнса 10-мӗшӗччен тата майӑн 11-мӗшӗнчен тытӑнса 15-мӗшӗччен районта полиомиелита хирӗҫ иммунитет аталантарассин наци кунӗсем иртӗҫ.***

Полиомиелит - вируслӑ инфекци, вӑл пуҫ тата ҫурӑм шӑмми мимине сиенлетет, алӑсемпе урасене шалкӑм ҫапать, ҫакӑ час-часах инвалида кӑларать. Раҫҫей Федерацийӗнче полиомиелит чирӗпе кашни ҫулах чирлеҫҫӗ. 1995 ҫултанпа Тутарстанта полиомиелит палӑрман, анчах Раҫҫей Федерацийӗнче эпидемиологи лару-тӑрӑвӗ ҫивӗчленнӗ, Чечен республикинче нумай чирлеҫҫӗ. Ашшӗ-амӑшӗсен ҫакна асра тытмалла: вӑхӑтлӑ иммунизаци чиртен сыхлать. Ачасене прививкӑна 3 уйӑхранах тӑваҫҫӗ. Вакцинӑна ҫӑвара 4-шар тумлам тумлатаҫҫӗ.

## Талантсем пур, анчах...

Кӗҫнерникун районти культура ҫуртӗнче хулари предприятисемпе организацисенчи художество пултарулӑхне хутшӑнакансене районти халӑх творчествин смотр-конкурсне суйласа илесси иртрӗ. Унччен смотр-конкурсшӑн яваплӑ ҫынсем - кусем вара, тӗпрен илсен, районти культура пайӗн тата культура ҫурчӗн ӗҫченӗсем - зонӑри смотр-конкурсра пулса юлашки концерта хутшӑнма хӑйне евӗр творчество коллективӗсене тата уйрӑм ҫынсене палӑртрӗҫ.

Смотр-конкурса Нурлат хулине ҫӗнӗ статус- республикӑна пӑхӑнса тӑракан хула - панине тата Октябрь районне Нурлат районӗ ят панине халалланӑ.

Ташӑ-юрра хакланӑ чухне жюри ӑсталӑха, артистла тата сцена культурине, репертуар хӑйне евӗрлӗ пулнине шута илӗ. I тата II тур итогӗсем тӑрӑх районта талантсем чылай, анчах та сцена ҫинче кирлӗ культурӑпа пурте палӑрмаҫҫӗ. Кӑна ӑнланмалла ӗнтӗ: ялсенче культура тӗлӗшпе ӗҫлекен специалист питӗ сайра. Хуласенчи предприятисемпе учрежденисен художество пултарулӑхӗн коллективӗсем ҫинчен каласан, жюри кунта вӗсем тӗрлӗ жанр кӑтартнине палӑртрӗ. Юлашки тур апрель уйӑхӗн пӗрремӗш ҫуррине иртӗ, районти сцена ҫинче художество пултарулӑхӗн коллективӗсем тата уйрӑм ҫынсем хӑйсен таланчӗсене кӑтартӗҫ.

## Ӑшшӑн саламлатпӑр!

*Тутарстан Республикин Указӗпе "Нурлатнефть" НГДУ тӗп инженерне **Риф Ахтямович САФИУЛЛИНА** "Тутарстан Республикин тава тивӗҫлӗ нефтяникӗ" хисеплӗ ят панӑ.*

## Ҫӗре апатлантарсан, пуян тухӑҫ ҫитӗнтерӗн

**Цифрӑсен пӗрремӗш графи - мартӑн 25-мӗшӗ тӗлне районти хуҫалӑхсенчи минераллӑ удобренисен запасӗ, иккӗмӗшӗ - вӗсен запасӗ кӗркунне кӗртнине те шута илсе (пӗр гектар пуҫне витӗм кӳрекен веществосем ҫине куҫарса шутласан, килогрампа)**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Сӗт-ҫу комбиначӗн х/х | 159 | 164 | "Рассвет" | 62 | 70 |
| | | | "Тӗрнеҫ" | 60 | 85 |
| Сахӑр завочӗн х/х | 137 | 145 | Кузнецов яч.хис. | 58 | 66 |
| "Игенче" | 125 | 153 | МСОн х/х | 53 | 78 |
| "Татарстан" | 107 | 119 | "Киклӗ" | 53 | 66 |
| "Заря" | 106 | 122 | "Урняк" | 50 | 61 |
| "Родина" | 105 | 156 | "Кондурча" | 47 | 50 |
| "40 лет Победы" | 105 | 115 | "Заветы Ильича" | 45 | 71 |
| М.Джалиль яч.хис. | 100 | 123 | "Ҫуткӳл" | 45 | 58 |
| "Дуслык" | 98 | 200 | "Тан" | 43 | 61 |
| "Комбайн" | 94 | 107 | | | |
| Мичурин яч.хис. | 93 | 100 | "Агрохимсервисӑн" х/х | 38 | 75 |
| "1 Мая" | 88 | 102 | "Черемшан" | 26 | 47 |
| Хафизов яч.хис. | 82 | 92 | "Лесная Поляна" | 22 | 34 |
| Синдряков яч.хис. | 80 | 101 | "Алга" | 19 | 24 |
| РСУн х/х | 74 | 114 | "Элмет" | 13 | 21 |
| Нефтебазӑн х/х | 65 | 72 | **Район тӑрӑх** | **67** | **83** |

Пӗлтӗрхи результатсем минераллӑ удобренисемпе пӗлсе ӗҫлени пысӑк тухӑҫ илме май панине уҫҫӑн кӑтартса пачӗҫ. Калӑпӑшне илсен, пӗлтӗр анасене витӗмлӗ веществосем ҫине куҫарса шутласан, пӗр гектар пуҫне 165 килограмм удобрени кӗртнӗ. Шутланӑ тӑрӑх, пӗрчӗллӗ культурӑсен кашни гектарӗнчен пухса илнӗ 10,7 центнерне, урӑхла каласан, тухӑҫӑн тӑваттӑмӗш пайне, минераллӑ удобренисемпе апатлантарнипе ҫитӗнтернӗ. Ку республикӑри чи пысӑк кӑтартусенчен пӗри. Ҫавӑнпа та сухаланӑ ҫӗрсен пӗр гектарӗ пуҫне кӗртнӗ минераллӑ удобренисен кашни килограмм усси, нормӑпа танлаштарсан, тӗрӗссипе 147 процент шутланнӑ. Хушма апатпа ытларах усӑ курнӑ хуҫалӑхсенче ҫак кӑтартусем тата та пысӑкрах пулнӑ.

Анчах, шел пулин те, кӑҫалхи тухӑҫшӑн паян мӗнпур хуҫалӑхсенче пӗр пек тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫак даннӑйсенчен камӑн мӗн чухлӗ удобрени пухӑнни паларать. Пӗлтӗр кӗркуннехи тапхӑрта удобренисем кӗртессине ҫителӗклӗ тимлӗх уйӑрманни те пӑшӑрхантарать. "Дуслык" ассоциацире, сӑмахран, минераллӑ удобренисен ҫуррине кӗркунне кӗртнӗ,"Родинӑра", РСУн хушма хуҫалӑхӗнче - пӗрре виҫҫӗмӗш пайне, "Игенче", Синдряков яч.хис. ассоциацисенче - пӗрре пиллӗкмӗш пайне. Ҫуркуннене те вӗсем ҫителӗклӗ удобрени хатӗрленӗ.

Паянхи куна удобренисен пысӑках мар запасӗ пур хуҫалӑхсенче вара пӗлтӗрхи кӗркунне кӗртнӗ туксем те сахал - гектар пуҫне пурӗ темиҫе килограмм шутланать. Шел, ҫак хуҫалӑхсенче удобренисем пӗлтӗрхинчен сахалрах пулин те, вӗсен запасне ӳстерес тӗлӗшпе халь те тивӗҫлипе активлӑх кӑтартмаҫҫӗ.

Район ертӳҫисем удобренисем турттарса килес тӗлӗшпе витӗмлӗ мерӑсем йышӑнаҫҫӗ. Анчах хуҫалӑхсенчен хӑш-пӗринче пур запаса та упрама пӗлмеҫҫӗ. Кӗркуннехи-хӗллехи тапхӑрта пысӑк михӗсемпе илсе килнӗ кӑткӑс удобренисем тулта хӗл каҫнӑ. Ҫавӑнпа та вӗсене, ҫаплах витнисене ҫурхи шыв ан илтӗр тесе тӑрӑшмалла. Ҫав вӑхӑтрах сапаланса выртакан удобренисене михӗсене тултармалла. Хире тухсан ҫак ӗҫе пурнӑҫлама вӑхӑт та, майсем те пулмӗҫ.

## Марихуана çитĕнсе çитмен ачан организмне пысăк сиен кӳни



# "Ку курăк çеç вĕт"

Таня С. 1995 çулта 10-мĕш класа куçсан, класс руководителĕ ăна питĕ пултаруллă вĕренекен тесе палăртнă. Пĕрремĕш çур çуллăха вăл лайăх паллăсемпе вĕçленĕ. Класс тулашĕнчи мероприятисене хутшăннă, пианинопа калама вĕреннĕ.

Çавăн чухнех 15 çулхи Таня хăйĕнчен аслăрах арçын ачасемпе туслашса кайнă та унăн пурнăçĕ сасартăк улшăннă. Пĕррехинче каçхине, çĕнĕ юлташĕсемпе уçăлса çӳренĕ чухне Игорь ятлă çӳллĕ те чипер каччă ăна марихуаналлă пирус тыттарнă: "Ку наркотик мар, курăк çеç".

Таня килĕшнĕ: "Пĕрре çеç туртса пăхăп".

Юлташĕсем каланипе вăл тутлă шăршăллă тĕтĕме çăтса ӳпкинче нумайччен, сывлайми пулнине сисиччен тытса тăнă. Каярах тата та туртнă. Тĕтĕме каялла кăларнă май Таня пуçĕ çаврăннине туйнă. "Тата пар-ха", - ыйтнă вăл Игорьтен.

**Таньăн ӳпки тĕтĕмпе тулсан, марихуана молекулисем ӳпкен питĕ çӳхе сийĕнчен тухса унăн юнне кайнă, темиçе самантран вара марихуана пуç мимине те çитнĕ.**

Çĕнĕрен туртнă хыççăн Таня хăйĕн ӳт-пĕвĕнче ăшă киленӳ сарăлнине туйнă. Вăхăт чарăннă. Тĕспе шав тата вăйлăрах курăннă, илтĕннĕ.

Наркотиксен вăйĕ 4 сехете яхăн тăсăлнă.

Таня марихуанăна хăнăхсах пынă. Вăл ирхине, шкула кайнă чухне е тăхтав вăхăтĕнче туалетра туртнă. Çав вăхăтрах унăн организмĕ наркотика ытларах та ытларах ыйтнă. Вăл вара пăрахма хăш вăхăтра та пултарăп-ха тесе шутланă.

**Марихуана молекулисем пуç мимин рецепторĕсене витĕм кӳрсе киленӳ туйăмĕ çуратаççĕ, ялан туртакансем наркотика майĕпен хăнăхса пыраççĕ, çавăнпа та вăл ытларах та ытларах кирлĕ.**

Таня уроксене сиктерме пуçланă, вĕренӳ паллисем те начарлансах пынă.

Таньăна нимĕн те, никам та кăсăклантарман.

Наркотиксем унăн пурнăçĕ пулса тăнă. Вăл ниепле те чарăнайман...

Çав вăхăтрах Таньăн сывлăхĕ те улшăннă: унăн аллисем, урисем яланах шăннă. Вăл ӳслĕке пула вăраннă, ашшĕпе амăшĕ ан илтчĕр тесе пуçне минтер айне чикнĕ. Уйăх хушши пăсăлнă...

Марихуана туртнă май организма табак туртнинчен виçĕ хут нумайрах сухăр лекет.

Кантăр тĕтĕмĕ юн тымарĕсене сарать, куççем хĕрелеççĕ, сăмсан çемçе тканĕсем шыçаççĕ. Туртакансем бронхит чирĕпе чирлеççĕ.

Юлашкинчен марихуана ар гормонĕсен гипофизне сиенлетет.

... Марихуана туртсан чĕрене кислород нумай кирлĕ, ку пĕр енчен, тепĕр енчен вара - вăлах кислород чĕре патне пырассине чакарать те.

Вунă хут сывланă хыççăн чĕре тĕлсĕр тапма пуçлать...

Хĕрĕ реанимацире выртнине пĕлсен, Таня амăшĕ хурлăхлăн макăрчĕ. Çакă вара Таньăна та, унăн ашшĕ-амăшне те тахçанах шухăшлаттармалла пулнă.

... Каярах вăл хăй больницăра выртни çинчен час-часах шутларĕ: "Эпĕ чутах вилмерĕм, юлташсем вара пĕрре те мана пырса курмарĕç".

Таня çуртĕнче татах пианино сасси, икĕ çул иртсе кайнă пулин те, Таньăна халĕ те сывлăшра куçакан япаласем курăнаççĕ...

Çапах унăн шанчăкĕ çирĕп-ха, малтанхи пек.

**А.АНОСОВ.**

# Ют çĕршыв çыннисене регистрацилемелли правилăсем çирĕп



СССР саланса кайнă хыççăн союзлă республикăсем ют çĕршывсем пулса тăчĕç - пĕрисем çывăхрисем, теприсем - аякрисем. Çакна май чикĕсем, таможньăсем урлă иртес, çаплах "ют çĕршыв" гражданĕсем Раççей Федерацийĕн территорийĕнче уйрăммăн илсен, Тутарстана килсе пурăнас тĕлĕшпе йывăрлăхсем сиксе тухрĕç.

Раççей Федерацийĕн тулашĕнче, малтанхи СССР территорийĕнче яланах пурăнакан граждансем Тутарстан Республикине вăхăтлăха килсе пурăннине йĕркелес тĕлĕшпе, халăх куçса çӳрени япăх енчен ан палăртăр тесе, çаплах йĕркепе обществăлла хăрушсăрлăха çирĕплетес тĕлĕшпе Тутарстан Республикин министрсен Кабинечĕ çавăн пек çынсене регистрацилемелли правилăсем çирĕплетнĕ. 1995 çулхи майăн 10-мĕшĕнчен Тутарстан Республикин Президенчĕ "Тутарстан Республикине килнĕ граждансене, РФ тулашĕнче, малтанхи СССР территорийĕнче яланах пурăнаканскерсене, регистрацилемелли правилăсене пăснăшăн административлă явап тытасси çинчен" Указ кăларнă.

1997 çулхи мартăн 12-мĕшĕнчен вара Тутарстан Республикинче "Ют çĕршыв гражданĕсем тата гражданлăхсăр çынсем Тутарстан Республикинче пурăнас тĕлĕшпе йышăннă правилăсене пăснăшăн административлă явап тытасси çинчен" Закон вăя кĕнĕ.

Шалти ĕçсен Нурлат районĕнчи пайĕн паспортпа виза службин уйрăмĕ çак Постановленисемпе Законсене пурнăçлас тĕлĕшпе уйрăм ĕçсем тунă. Çапла, 1997 çулта СНГ çĕршывĕсенчен района килнĕ 940 гражданина регистрациленĕ, вĕсенчен 9 миллион тенкĕ (кивĕ укçапа) сумма пухăннă. Тутарстан Республикин Законне пăснăшăн 49 çын тĕлĕшпе протокол çырнă, 5 миллион ытла (кивĕ укçапа) тенкĕ штраф илнĕ. Кăçалхи икĕ уйăх хушшинче СНГ çĕршывĕсенчен килнĕ 44 çынна регистрациленĕ, тĕпрен илсен, вĕсем пурте сутуçăсем. Закона пăснă 6 çынна палăртнă, çав шутра 1 çынна, Нурлатра пурăнаканскере, регистрациленмен граждансене пурăнма вырăн панăшăн айăпланă.

Анчах йышăнакан мерăсене пăхмасăр, Тутарстан Республикинче, уйрăмах пысăк хуласенче ют çĕршыв çыннисем килсе пурăнас тĕлĕшпе ларутăру йывăр-ха. Çавăнпа та Тутарстан Республикин министрсен Кабинечĕ 1997 çулхи январĕн 23-мĕшĕнче 63-мĕш номерлĕ Постановлени йышăннă, унта Тутарстан Республикин предприятийĕсемпе организацийĕсенче ĕçе вырнаçакан ют çĕршыв гражданĕсем <u>**Тутарстан Республикин Миграци службинче ирĕк илнĕ хыççăн çеç**</u> регистрацилеме пултарнине пăхса хăварнă. Ку енĕпе организацисен ертӳçисем çак документсене тăратмалла:

1. Тутарстан Республикин Миграци службин ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Р.С.Ахмеров ячĕпе çырнă заявлени. Ĕç параканăн заявленийĕнче ĕçе вырнаçакансен шутне, ĕç вырăнне палăртмалла.
2. Ют çĕршыв рабочийĕсемпе специалисчĕсен списокĕ. Унта отрасльне, хăш çĕршывра çуралнине тата профессийĕсене палăртмалла.
3. Организацин учредитель тата регистраци документчĕсем (Устав, Положени, регистраци свидетельстви, копийĕсем).
4. Ют çĕршыв гражданинĕпе ĕç условийĕсем çинчен маларах калаçса татăлнине çирĕплетекен документ е ĕç договорĕн проекчĕн копийĕ. Документ Раççей Федерацийĕнче вăйра тăракан пĕтĕм тĕнчери правон ĕçпе практики çинчен калакан законĕпе килĕшсе тăмалла.
5. Район администрацийĕ ют çĕршыв çыннисене ĕçе явăçтарасси пирки сĕнни.
6. Палăртнă йĕркепе ĕçлеме ирĕк паракан документа ыйтни.

Ют çĕршыв гражданĕсем тĕлĕшпе йышăннă правилăсене пăсакан ĕçлĕ çынсене Тутарстан Республикин 1997 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче йышăннă Закон тăрăх административлă явап тыттараççĕ. Унта 50 чи пĕчĕк ĕç укçи чухлĕ штраф тӳлеттерессине пăхса хăварнă, тепĕр хут пăссан - 100 таран.

Çак Постановленисемпе Законсем тĕлĕшпе интересленекенсем Нурлат ГРОВД ОПВСнче ыйтса пĕлме пултараççĕ, телефон: 2-11-33 е Тутарстан Республикин Миграци службинче, телефон: 37-72-84.

**М.ГИРФАНОВ.**
**Тутарстан Республикин Нурлат ГРОВД ОПВС начальникĕ, милици майорĕ.**

*<u>* Кил-çурт, хушма хуçалăх</u>*

### Çулçă тăрăх пĕлме пулать

Тăпрара тутлăхлă элементсем çителĕксĕр пулнине ӳсен-тăран тăрăхах пĕлме пулать. Аяларах веществосен ячĕсене тата вĕсем çителĕксĕр пулнине кăтартакан паллăсене илсе паратпăр.

Азот çителĕксĕр - çулçăсем пысăк мар, шупка симĕс, сараласçĕ, ир тăкăнаççĕ.

Фосфор çитмен чух çулçăсем тĕттĕм симĕс е кăвакрах тĕслĕ, хĕрлĕрех тĕс кăштах палăрать, типеççĕ, хуралаççĕ.

Кали çителĕксĕр пулсан çулçă хĕррисем сараласçĕ, хăмăрланса типеççĕ, аялалла пĕтĕрĕнсе тăраççĕ, пĕркеленчĕклĕ пулаççĕ.

Кальци çитмен чух çӳлти папкасем, тымарсем сиенленеççĕ, типеççĕ.

Магни çитменни - çулçăсем шупкаланаççĕ, хĕррипе тата çулçă шăнăрĕсем хушшипе сарă, хĕрлĕ е чернил тĕслĕ пулса каяççĕ.

Тимĕр çитменни - çулçăсем шупка симĕс, вĕсем типсе пĕтмеççĕ, анчах çулçă шăнăрĕсем хушшинче шуралнă вырăнсем - хлороз - пулать.

Пăхăр - çулçă вĕçĕсем шуралаççĕ, хлороз палăра пуçлать.

Бор çитмен чух çӳлти папкасем, вĕт тымарсем типеççĕ, ӳсен-тăран чечеке лармасть, çулçăсем тăкăнаççĕ.



*Нурислам нумай отраслĕ производство предприятийĕнче ĕçлеме тытăннăранпа кăçал шăп 10 çул çитет. Вăл - ассенизатор. Çаврăнăçуллă та вăр-вар, хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет, теççĕ ун çинчен.*

*Ӳкерчĕкре: Н.Хисамов.*

*Н. Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*







РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

### Ырă кăмăлшăн тав тăватăп

Эпĕ Нурлат-Тĕкĕрмел маршрутри автобуспа час-часах çӳретĕп. Çакна асăрхарăм: Марс Мусаевич Гайнутдинов водитель хăйĕн тивĕçĕсене тӳрĕ кăмăлпа, çынсене хисеплесе пурнăçлать. 71-33 ТБФ автобусра яланах тирпейлĕ, урайĕпе чӳречисем таса. Пассажира ăçта ларма вырăн пуррине кăтартать, чарăну умĕн унăн ятне пĕлтерет, ватă çынна автобусран анма пулăшать.

Хальхи вăхăтра çыннăн ырă кăмăлĕ питĕ хаклă...

**М.ЛОГИНОВ,**
**Совет Çарĕн II группăри инваличĕ, Ялавăр ялĕ.**

### Хăйĕн сăмахне тытнă

Пĕррехинче эпир хамăрăн Мир урамĕнче пурăнакан ытти ветерансемпе канашласа, "Нурлатнефть" НГДУ начальникĕ М.М.Хузин патне кайса пирĕн çуртсене канализаципе çыхăнтарас тата газ кĕртес тĕлĕшпе пулăшма ыйтрăмăр. Вăл пире пулăшма шантарчĕ. Канализаципе çыхăнтарас ыйтăва татса панăшăн эпир Марат Мухлисовича тав тăватпăр. Эпир ăна çирĕп сывлăх, ырлăх çеç сунатпăр. Малашне вара пирĕн çуртсене газ кĕртессе те шанатпăр.

**Мир урамĕнче пурăнакан ХАМИДУЛЛИН, ВЕРИН тата ыттисем.**

# Çапах та шанăç пур

Хресченсен хуçалăхĕсен “Заветы Ильича” ассоциацийĕнче иртнĕ çулталăк отчечĕн пухăвĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллинăн çынсемпе уççăн калаçмалли сăлтав пурччĕ. Маларах тĕреклĕ пулнă хуçалăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре уйрăмах ăнăçлăхсем тунăскер, сĕт суса илессинче кăтартусемпе районта малти вырăнсенче пынăскер, юлашки çулсенче палăрмаллах вăйсăрланнă. Чăнах та, çĕр ĕç отраслĕнче, уйрăмах пĕрчĕллĕ культурăсем акса ӳстерес тĕлĕшпе хуçалăх пĕлтĕр те начар ĕçлемен. Ăнсăртран мар ĕнтĕ администраци пуçлăхĕ çулсем ӗрринчи кĕрхи туллăн уйĕсен пуян тухăçне аса илчĕ. Ытти культурăсен тухăçĕ те кӳршĕсеннинчен начар пулман, пĕлтĕр пăрça та хăйĕн тухăçĕпе савăнтарнă. Анчах та хуçалăхри ĕçсен кăтартăвĕсем, пĕтĕмĕшле илсен, савăнтармаççĕ. Тĕслĕхрен, иртнĕ çул патшалăха пĕр ĕне пуçне 2526 килограмм сĕт çеç сутнă, çак продукцийĕн таварлăхĕ те пĕчĕккĕ пулнă. Хуçалăх çулталăка пысăк тăкаксемпе вĕçленĕ. Шел пулин те, сĕт суса илесси кăçал та япăх шайра, хуçалăх районта кая юлса пыракансен хушшинче шутланать. Сысна ĕрчетес отрасльте те мухтанмалли çук.

Çакăн пек ларутăрушăн хуçалăх председателĕ А.И.Баранов çеç айăплă мар. Çак пухура унăн заявленине тĕпе хурса ăна хăйĕн тивĕçĕсенчен хăтарчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ тухса калаçнинче хуçалăхăн малтанхи çул-йĕрĕ, хальхи пурнăçĕ, малашнехи планĕсем уççăн курăнчĕç. Фатих Саубанович хальхи условисенче хуçалăха тытса пымалли ĕçе тĕпрен улăштармалли, çавна май çĕрĕн чăнчăн хуçи, хăйĕн ĕçĕн результачĕсемшĕн тăрăшакансем тата малашлăх çинчен шухăшлакансем, пулмалли çинчен каласа ку тĕлĕшпе çĕр реформи иртнересси пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртса хăварчĕ. Çĕр сутасси çинчен, çĕр пайĕсем пирки каласан, кунта кашни хăй шухăшламалла, никама та вăйпа ирĕксĕрлемелле мар тесе хăварчĕ. Администраци пуçлăхĕ районта ĕçе йĕркелемелли çĕнĕ формăсене - кооперативсене пурнăçа кĕртсе вĕсенче ăнăçлăхсем туни çинчен каласа панине те пухăва хутшăнакансем интересленсе итлерĕç. “Заветы Ильича” хуçалăхра та реформăсем иртерсен ĕçсем лайăх енне улшăнĕç тенине кăмăлпах йышăнчĕç. Хуçалăх ĕçченĕсен малашнехи планĕсемпе шухăшĕсем вара пур, çавăнпа та вĕсем хăйсем хуçалăх ертӳçи пулма пĕр саслăн пулса суйланă Николай Викторович Белова çирĕп шанаççĕ. Вăл унччен “Зузеевнефтепромра” тĕп инженер пулса ĕçленĕ. Унăн та тĕрек пур - пухура çулталăк итогĕсем тăрăх премиленĕ чухне ĕçченсем хушшинче сцена çине виçĕ хут хăпаракансем те пулчĕç. Кашни вĕсем пек тăрăшса вăй хурсан, хуçалăх ĕлĕкхи чапа таварсан, ялта пурăнакансен пурнăç шайĕ те лайăхланĕ. Çав шутра яла газификацилесси те ĕмĕтсенче çеç юлмĕ. Газ ял хĕррине çитнĕ ĕнтĕ, апла пулсан пĕрремĕш çуртсенче “сенкер çутă” çуталса каяссине нумаях кĕтмелле пулмĕ.

Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.



## Пурнăçĕ тăршшĕпе - фермăра

*Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенĕн ĕçĕ йывăрри çинчен калама та кирлĕ мар. Çак отрасльте, уйрăмах доярка пулса, чăтăмлă хĕрарăмсем ĕçленинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Хафизов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Валентина Аркадьевна та пурнăçĕ тăршшĕпех фермăра вăй хурать. Хальхи вăхăтра хуçалăхăн Ерепьелĕнчи ферминче условисем çăмăлах мар, çапах çак ĕçе хăнăхнă хĕрарăмсем ăна кунран-кун тӳсĕмлĕ те çине тăрса пурнăçлаççĕ. Хуçалăхра сĕт суса илес ĕç лайăх пынинче Валентина Аркадьевна Илюшкина пек тăрăшуллă дояркăсен тӳпи те пур.*

*Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕ.*



## Пирĕн интервью

*Электроэнерги вăл сывлăх пекех: вăл пур чухне эпир унпа перекетлĕ усă курмастпăр. Ку е тепĕр сăлтава пула электроэнергие сӳнтерсен вара, эпир унăн пысăк пĕлтерĕшне çавăнтах туятпăр. Электроэнерги пĕтнин сăлтавĕсем тĕрлĕрен, вĕсем нумай енчен пиртен те килеççĕ. Çак тĕлĕшпе “Топливо ресурсĕсемпе усă курнăшăн тӳлемен организацисене электричествăпа ăшă энерги тата газ парассине чарасси е чакарасси çинчен” постановленире çирĕп требованисем пăхса хăварнă, ăна 1998 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн правительстви йышăннă. Çав вăхăтрах Раççей правительстви çитес вăхăтра пире электроэнерги хакне ӳстерсе “савăнтарĕ”. Çакна май эпир “Татэнерго” производствăпа эксплуатаци пĕрлешĕвĕн Чистай уйрăмĕнчи Нурлат участокĕн ертӳçипе Д.Ш.ДИНЕЕВПА калаçма шутларăмăр. Пирĕн калаçу вара каллех электроэнергипе усă курмалли правилăсем çинчен.*

## Сутăпа ан выльăр

- Чи малтан çакна калас тетĕп: район ертӳçисем тăрăшнипе хуçалăхсем, вырăнти самоуправленин Совечĕсем пысăк парăмсене парса татнă. Çапах усă курнă электроэнергишĕн халĕ те тӳлеме васкаман предприятисемпе организацисем пур-ха. Тĕслĕхрен, “Агрохимсервис” акционер обществин парăмĕ 504 пин тенкĕ (деноминациленĕ укçапа), МСО - 449 пин, “ТатРИТЭК нефть” НГДУ - 641 пин, чугун çул станцийĕ - 410 пин тенкĕ. Чăнах та ĕнтĕ, халĕ экономика енĕпе никама та çăмăл мар, çапах та парăм çумне кашни кун 1 процент пени хушăнса пынине аса илтеретпĕр. Парăма тӳлесе татмасан пирĕн тата çирĕпрех мерăсем йышăнма, электричествăна сӳнтерме ирĕк пур. Иртнĕ çул, çакăн пек мерăсемпе “Агропромэнерго” акционер обществинче, вăрман хуçалăхĕнче, ДРСУ ра усă курма тиврĕ.

**-Уйрăм çынсем те “вутпа выляççĕ-и?”**

- Çапла, шел пулин те, правилăсене пăсакансем каярахри ĕç-пуç çинчен шутламаççĕ. Пĕлтĕр вĕсене хытă айăпланă. Тĕслĕхрен, Куракъелĕнчи С.В.Чернована ăшăтакан электроприборсене хăй тĕллĕн сыпăнтарнăшăн 1914 пин тенкĕлĕх (кивĕ укçапа) штрафланă. Петровский поселокĕнче пурăнакан В.П.Матвеев çуртне ăшăтма хăй тĕллĕн электротен хускатнă. Çак “çĕнĕлĕх” ăна 708 пин тенке ларнă. Правилăсене пăснăшăн çаплах Пӳлеркӳлĕнчи М.С.Ереповăна, Чулпанти Махмутова, “Тĕрнеç” ассоциацири Львована явап тыттарнă. Кăçалхи темиçе уйăх хушшинче те çакăн пек тĕслĕхсем палăртнă.

Правилăсене пăсакансем тĕлĕшпе йышăнакан мерăсем малтанхи пекех çирĕп пулĕç. Халь эпир çутăсăр пурăнма пултараймастпăр, çавăнпа унпа перекетлĕ усă курар. Электроэнерги вăрлакансен те шухăшлама сăлтав пур тесе шутлатăп. Тĕрĕсмарлăха тупса палăртсан вара айăпа вĕсем счетчиксем юсавсăрри çине йăвантараççĕ. Питĕ ансат мел пур вĕт - пире кăна пĕлтермелле.

**- Сирĕн управленийĕн халь çĕнĕ адрес пулмалла?**

- Çапла, пирĕн кантур халь Гиматдинов урамĕнчи халăха йăла енчен тивĕçтерекен управленин çуртĕнче вырнаçнă. Сире мĕнле те пулин ыйтусем канăçсăрлантараççĕ пулсан, пырăр, ырă сунса кĕтетпĕр.

С.ХАЙРУЛЛИНА калаçнă.

# Тӳлессинче - чăрмав çук

Кăчăканлăри сĕт пухакан Насых Шагитович Шагитов 1996 çулхи итогсемпе районти ытти хуçалăхсем хушшинче чи лайăххи пулнă. Ялти кашни ĕнерен 507-шер килограмм сĕт пуçтарнă, ăна, сĕт пухакан опытлă ĕçчене, ĕçре малта пыракансен слетĕнче хаклă парне тата асăну хăйăвĕ панă. Пĕлтĕрхи кăтарту та лайăх пулнă, уйрăм хуçалăхсенчи кашни ĕнерен 754-шар килограмм сĕт сутăн илнĕ. Ку тĕлĕшпе ĕçсем кăçал та начар мар. Кĕскен каласан, хатĕрлевçĕ çулсерен тӳрĕ кăмăлпа тата тухăçлă ĕçлет. Насых Шагитович 70 çулта пулнине шанас та килмест, ветеран вăр-варлăхне чылайăшĕ ăмсанма пултарать. Çуллахи вăхăтра вăл ирхине 3 сехетре урача çинче - лашине кӳлет те ял урамĕ тăрăх каять, икĕ сехетрен вара флягăсем тулаççĕ.

Кăçал вăл Ильхам Валиевич Хафизуллинпа пĕрле вăй хурать: ялта 210 ĕне, ку ĕçе пурте хутшăнмаççĕ пулин те, хăйсенчен ытлашши сĕте парас текенсем те сахал мар. Сĕт пухакансене иккĕшне те флягăсемпе, сĕт виçекен хатĕрсемпе, транспортпа тивĕçтернĕ. Вĕсен мĕнпур продукци шутра, пĕр килограмм сĕт те çухалмасть. Кашни кун хулана 7 центнера яхăн сĕт ăсатаççĕ. Панă продукцишĕн сĕт сортлăхне тата çулăхне шута илсе кашни уйăхра тӳлеççĕ. Ял çыннисене укçа ялан кирлĕ. Ялта икшер, виçшер ĕне усракансем те пур. Паллах, çакăн усси пур ĕнтĕ. Пĕр уйăх хушшинче çур тонна тата ытларах сĕт паракансем те пур. Сăмахран, февраль уйăхĕнче хăй Н.Ш.Шагитов 556 килограмм, Мунип Давлетшин пенсионер - 585, Наиля Минапова - 869, Ханиф Гатауллин - 932 килограмм сĕт панă.

- Укçине кăна вăхăтлă паччăр, сĕтне вара эпир ăна сутăпăр, - теççĕ ял çыннисем.

Самоуправленин Кăчăканлă Совечĕ халăхран сĕт пухассине яланах пысăк тимлĕх уйăрать. Çакăнпа çыхăннă ыйтусене Совет канашлăвĕсенче тата ялти пухусенче те пăхса тухнă. Мĕн каламалли пур ĕнтĕ, ку вăл çемье бюджетне пуянлатмалли резерв, уйрăмах сĕт панăшăн укçа вăхăтлă тӳленĕ условисенче.

Т.АЛЕКСЕЕВА.



# Апрелĕн 1-мĕшĕ - КУЛĂШ кунĕ



***Çул юппинче туссем тĕл пулаççĕ. Пĕри тепринчен ыйтать:***

***- Сана Кирле кивçен илнĕ укçана каялла тавăрса пачĕ-и? Мана вара пама шутламасть те.***

***- О-о-о! Мана виçĕ кунтан киле пырсах пачĕ.***

***- Мĕнле апла?***

***- Эпĕ ăна процентпа панăччĕ çав.***

## Хайхи-майхи

шӳт

Васил Васильч "р" сасса мĕн ачаран калаймасть. Ун вырăнне "л" сасă кĕртсе лартать. "Арăм" вырăнне "алăм", "хăяр" вырăнне "хăял" тет.

Пĕр çулхине Васил Васильчăн пахчинче çĕр улми пит тухăçлă пулать. Колхозран лаша илет те çывăхри крахмал заводне сутма тиесе каять. Лере çĕр улми паракансен черечĕ темĕн тăршшĕ иккен. Яланхи йăлипе Васил Васильч черетсĕр йăпшăнса кĕме, улма йышăнаканнипе вăрттăн калаçса пăхма шутлать, анчах çыннине палламасть. Юлашкинчен мужиксен




калаçăвĕнчен улма йышăнакан çын Аркаш ятлине пĕлет те, ун патне пырса: "Итлеха, Алкаш..." - тет. Лешĕ, ахаль те хĕрĕнкĕскер, калаçса тăмасть, пысăк чăмăрĕпе пĕррех тăхăнтартса ярать. Васильч пăлтăр-палтăр çеç çĕре сирпĕнсе анать. Çĕр улмине сутаймасăрах каялла таврăнать.

Çак кунранпа Васил Васильч "р" сасă пур сăмаха урăх сăмахсемпе ылмаштарса калама тытăнать. "Сахăр" вырăнне "песук" е "чее пылаклатаканни", "çумăр" вырăнне "пĕлĕт çинчен çăвакан шыв" тет. Нимĕнле калама май тупаймасан вара "хайхи-майхи" текелет.

## Уявра шӳтлер-ха

Кĕтерук лавккана ĕçе кĕме пынă.

- Эсир малтан та сутуçă пулнă тетĕр, ун чухне растрата туса суда-мĕне лекмен-и? - тĕпчет директор.

- Çара çерçи мар вĕт эпĕ, ăнакăна чухлакалатăп, - мухтанать хĕрарăм.

* * *

- Кӳршĕм, тархасшăн мана турчăка пар, çав каттăршнăй Элекçипе ĕнер хуçса пăрахрăм хамăнне.

- Кайран кил, парăп... Малтан хам Павăла кĕтсе илем-ха.

* * *

Пĕчĕк Лисук пахчара ĕçлекен амăшне чӳречерен кăшкăрать:



- Анне, хăвăртрах кĕр пӳрте. Радиопа эс юратакан юрра параççĕ. Эс кĕриччен юрласа ан пĕтерччĕр тесе, радиона чартăм-ха.

* * *

- Эп сана ĕнер вунă тенкĕ панăччĕ, ăçта хутăн ăна? - мăкăртатать арăмĕ.

- Пĕр арçынна патăм.

- Мĕн тетĕн?! Мĕнле арçынна?

- Эрех сутакана.

### Хăрать...

Арăмĕпе упăшки пляжра выртаççĕ.

- Ылтăн япалусемпе бриллиантсене веçех мана парса хăвар, - тет упăшки.

- Мĕншĕн?

- Эсĕ вуçех ишме пĕлместĕн вĕт, вĕсем ахалех пĕтесрен хăратăп.



### Тӳлемеççĕ çав

***- Кур-ха, упăшки арăмĕпе мĕнле савăнать. Эсĕ пур ним тума та пĕлместĕн, - мăкăртатать арăмĕ телевизорпа анăçри эротикăлла кинона пăхса ларнă хыççăн.***

***- Ăна уншăн укçа тӳлеççĕ. Иксĕмĕр савăшнине курсан кам укçа парать? - тавăрать упăшки.***

## Те те пулĕ

шӳт

Ку мыскара çинчен Душанбе хулинчи университетра вĕреннĕ чухне илтме тӳр килнĕччĕ. Унта тĕрлĕ чĕлхепе калаçакан çамрăксем ăс пухатчĕç...

Пĕррехинче пирĕн ушкăнра вĕренекен Зина апатланма столовăя каять. Яшкапа иккĕмĕшне тата пĕр стакан чей илет те сĕтел çине кайса лартать. Хăй сумкине пукан хыçне çакса, булка илме самантлăха буфета пăрăнать. Таврăннă çĕре унăн яшкине пĕр негр çисе ларнине курах каять.



Лешне ним каламасăр, хĕр иккĕмĕш блюдăна çиме пуçлать. "Ку негрăн укçи çук, выçăхса çитнĕ пуль вăл, çитĕрех", - шухăшлать ăшĕнче.

Негр яшкана çисе пĕтерет те стаканри чее çуррине ĕçет. Унтан ерипен тăрать те вырăсла: "Спасибо за компани", - тесе столовăйран тухать.

- Пăх-ха эсĕ ăна, намăссăр, кĕççе пит, епле çĕр йăтса тăрать ун пек сĕмсĕре, яшкана çисе ячĕ те ним пулман пек тухса кайрĕ, - тарăхать хĕр.

Пăхать - пукан хыçĕнче сумки те çук. Ара, ку унăн сумкине те çаклатса кайнă куран! Зина сасхура хускатас тесе, ура çине сиксе тăрать. Пăхать - кӳршĕри сĕтел çинче унăн апачĕпе чейĕ лараççĕ, пукан хыçĕнче - сумки.

Негр мар, вăл хăй лешĕн апатне çинĕ иккен. Зина пĕр хĕрелет, пĕр шуралать. Унтан хăй илнĕ апата çиме пуçлать.




## Шӳткассем шучĕсем



Троллейбуса милиционер кĕрет. Пĕр мужик усал сăмахсемпе вăрçса тăнине курать те тӳрех ун патне пырать.

- Гражданин, - тет вăл сассине хăпартса, - эс мĕн общеествăлла вырăнта усал сăмахсемпе çӳйхашатăн?

- Тӳсме май çук, господин милиционер, - тавăрать этем. - Пульницăна кайрăм, унтан таврăнатăп...

- Вара кăшкăрмалла-и?

- Кăшкăрмалла çеç мар, çапса салатмалла!

- Кама!

- Арăма.

- Мĕншĕн?

- Çуратнăшăн... ачи негр вĕт, мать вашу!

- Ну, эппин, вăрçах... - ирĕк парать ăна йĕрке хуралçи.

* * *

Ватă кинемейрен журналист ыйтать:

- Миçе çулта-ха эсир, Хвекле аппа?



- Эй, çулĕмĕнĕ, çĕр çултан та иртрĕм пулĕ.

- Каласамăрччĕ нумай пурăннин вăрттăнлăхне?

- Ульăм, намăс та мари сана пĕччен хĕрарăма кун йышши ыйтусем пама, - йăл кулать шăлсăр карчăк.

* * *

Пряников студент экзамен тытать.

- Ыйтусене туллин хуравлаймарăр, Пряников. Литературăн пурнăçри вырăнĕ çинчен Лихачев академик каланине кăна уçса пани çителĕксĕр, - мăкăртатать профессор. - Манăн ĕçсенчи шухăшсене пачах шута илмен.

- Ара, Лихачев академикпа сирĕн кĕнекери шухăшсем пĕрешкелехçке, - тет студент.



## Пĕлтерӳсем

"Сюита" пианино сутăнать. Адрес: Ломоносов урамĕ, 21-5.

* * *

"Искра" тĕслĕ ВАЗ-21083 автомобиль сутăнать, 23 миллион тенкĕ. Адрес: Тельман урамĕ, 18-18.

* * *

Ринат Насырович Бильданов ячĕллĕ водитель удостоверенине тупакана тавăрса пама ыйтатăп, парне пулать. Адрес: Ленинградская урамĕ, 9-2.

* * *

1991 çулта туса кăларнă лайăх шайри УАЗ-3741 сутăнать. Телефон: 5-20-71, 16 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

Приватизацилемен икĕ пӳлĕмлĕ хваттере хушса тӳлесе хула варринчи пĕр пӳлĕмлипе улăштаратпăр. Вариантсем пулма пултараççĕ. Адрес К.Маркс урамĕ, 11-11.

* * *

1993 çулта туса кăларнă хура тĕслĕ ВАЗ-2106 сутăнать, кузовне 1994 çулта туса кăларнă, "Панасоник" квадра система. Адрес: Чаллăпуç, "Запчасти" автомагазин.

* * *

1984 çулта туса кăларнă лайăх шайри "Фольксваген" автомашина сутăнать, 20 пин тенкĕ. Телефон: 5-28-11, 18 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

1995 çулта туса кăларнă 06 çĕнĕ двигатель, 1991 çулта туса кăларнă ВАЗ-21063 сутăнаççĕ. Телефон: 5-24-54.

* * *

ВАЗ-2101 сутăнать. Телефон: 5-22-36.

* * *

Çурта хваттерпе улăштаратпăр. Адрес: Ломоносов урамĕ, 28, телефон: 2-10-81.

* * *

Дача валли çуна çинчи çурт сутăнать. Телефон: 5-16-12, 17 сехет хыççăн шăнкăравламалла.

* * *

Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 195 (2-мĕш хут). Телефон: 5-16-44.

* * *

Фанус Ирекович Билалов ячĕллĕ водитель удостоверенине тупакана тавăрса пама ыйтатпăр, парне пулать. Адрес: Киклĕ ялĕ.

* * *

Димитров урамĕнчи 18-мĕш çурт сутăнать. Телефонсем: 3-12-56, 2-14-10.

**"Экспресс - Фото" фотосалон фототаварсен, компьютерсен тата оргтехникăн, компьютер вăййисен анлă ассортиментне сĕнет.**

**Услугăсем паратпăр:**

- компьютерсене юсатпăр тата модернизацилетпĕр;
- копировальнăй аппаратсен картриджĕсене çĕнететпĕр;
- принтерсен лентисене сăрлатпăр;
- программăпа тивĕçтерессине йĕркелетпĕр;
- стандартсăр оборудовани вырнаçтаратпăр;
- компьютер сечĕсене монтажлатпăр.

Документсене валли васкавлă фото сĕнетпĕр: тĕрлĕ тĕслĕ тата хура-шурă, вăхăчĕ 2 минутран тытăнса 5 минутчен.

Формат - 2,5х3,5, 3,5х4,5.

(Евростандарт, аналог 3х4 тата 4х6).

4 сăнӳкерчĕк хакĕ: тĕрлĕ тĕслин - 16 тенкĕ, хура-шуррин - 12 тенкĕ.

Фотопленкăсене проявить тăватпăр тата сăнӳкерчĕксене пичетлетпĕр.

Проявить тунăшăн - 6 тенкĕ, сăнӳкерчĕксене пичетленĕшĕн (10х15) - 1 тенкĕ те 80 пус.

"Экспресс-Фотора" сутăн илнĕ пленкăсене тӳлевсĕр проявить тăватпăр.

Эпир кану кунĕсемсĕр 9.00 сехетрен пуçласа 18.00 сехетчен ĕçлетпĕр.

Апат вăхăчĕ 13.00 сехетрен тытăнса 14.00 сехетчен.

Адрес: Нурлат хули, Школьная урамĕ, Йăла çурчĕ, 2-мĕш хут, телефон: 5-37-51.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 865.